# Чăваш апачĕ – хуран кукли

**Хатĕрлекенĕ: Шупашкарти пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан 33-мĕш шкулта 4-мĕш «А» класра вĕренекен Краснова Ульяна**

**Ертсе пыраканĕ: чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Диарова И.А.**

**Ман тĕллев:**
**хуран кукли пĕçерме вĕренесси**
**Мĕншĕн çакна суйласа илтĕм-ха эпĕ?**

Мĕншĕн тесен хуран кукли -чăвашсен чи тутлă та юратнă апачĕсенчен пĕри. Тата ăна пĕçерме те çăмăлрах тесе шутлатăп. Ăна йӳçĕтмен чустаран çупаççĕ-вĕт.Уйрăмах ăшне тăпăрч (творог) хурсан юрататăп.



# Мĕнле пĕçермелле-ши?

Кукăль валли: 350г çăнăх, пĕр çăмарта, тăвар ( тутă каламалăх) ăшă шыв илсе хутăштармалла, ывăс çине хурса унаса çемçетмелле.




Espresso
Cappuccino
Capp
Coffee
ee
ino
resso
cappuccino
Capp

# Чуста хатӗр

# Тата мĕн кирлĕ - ха пире?




Тăпăрчă, çăмарта,
симĕс сухан,
тăвар, услам çу
тата  йăл кулă.

Тăпăрчăна, çăмартапа лайăх кăна хутăштаратпăр.



Чустана пайламалла та йĕтĕрпе сармалла.

Сарнă чуста çине тăпăрчă хумалла.



Кукăль «кантрине» хитре явма, паллах, хăнăху кирлĕ. Унтан та ытларах - йăл кулă!





Хитре пулчĕ -и?
Халь çак илĕртмĕшсене кăшт тăвар янă вĕрекен шыва сиктермелле.



6-7 минутран пиҫнӗ кукӑльсене малтан дуршлаг ҫине илсе хумалла( шывӗ сӑрхӑнтӑр), унтан услам ҫупа сиктермелле, ҫиелтен симӗс сухан сапса хитрелетсен тата та тутлӑрах пулмалла.



Хальхи медицина мĕн калать? 21-мĕш ĕмĕрте этем ытларах хими хутăшĕнчен хатĕрленĕ апат-çимĕç çиет. Çакă сывлăха сиен кӳрет. Сывлăхлă, илемлĕ, çирĕп пулас тесен экологи енчен таса апат çиме тăрăшмалла. Чăн- чăваш апачĕ, хуран кукли, таса апат шутне кĕрет те ĕнтĕ.

# Хуран кукли усăллă

Тăпăрчран ăсталанă кукăль шăлсене, шăмăсене кальципе тивĕçтерет. Пăспа пĕçернĕ хуран кукли усăллă пулнине çирĕплетеççĕ медиксем.





# Тĕллеве пурнăçларăм!




Ку апат – çимĕçе чăвашсем пысăк уявсенче, хăна умне лартса панă. Кулленхи пурнăçра эпир те, хальхи чăвашсем хуран кукли пĕçерсе çиетпĕр. Кăшт ĕлĕкрех пирĕн асаттесемпе асаннесем ăна хуранта пĕçернĕ, çавăнпа пулĕ ĕнтĕ ăна «хуран кукăлĕ»(вареники) тесе ят панă. Халĕ вара хурансем çук е пур пулсан та çак кукăле кастрюльсенче пĕçереççĕ.

. **Эпĕ те хуран кукли пĕçерме вĕрентĕм! Хамăн тĕллеве пурнăçларăм!**

Чăваш апачĕ – хуран кукли
Чи усăлли те чи тутли!
Туссем, ан манăр ĕмĕрне
Чăн-чăн чăвашăн апатне!

***Апачĕ тутлă пултăр!***

# Усă курнă литература:

1. Чăваш – апат çимĕçĕ. Шупашкар:Чăваш кĕнеке издательстви, 2014 ç.
2. Чăвашла- вырăсла словарь.М.И.Скворцов, 1992 ç.